## Николай Федоров Президент:

# УКАЗ ЯЛТИ КУЛЬТУРĂНА ÇИРĔП ТĔРЕВ ПАРĔ

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

**– Библиотекăсене çĕнетмелли унччĕнхи программăна пурнăçланин кăтартăвĕсем пирки мĕн калама пултаратăр?**

– Кун пирки паян федераци шайĕнче нумай калаçаççĕ – библиотекарьсен корпоративлă пĕрлĕхĕ те, патшалăх чиновникĕсем те. Федераци МИХĕсем нумай çыраççĕ. Тăватă çул каялла эпĕ ялсенче тĕслĕх библиотекăсем туса хурасси çинчен калакан указа алă пуснăччĕ. Республика бюджечĕн укçипе кăна эпир Раççейре тĕслĕх библиотекăсен сетьне тумалли тĕлĕнмелле акцие пуçартăмăр. Ĕнерхи мĕскĕн те хавшак 500 библиотека вырăнне çĕнĕ йышши 500 библиотека – пирĕн тĕллев çакăн пекчĕ.

Çавăнпа та кăçалхи çуркунне Раççей Президенчĕн Çырăвĕнче Раççей библиотекисене васкавлăн çĕнетмелли тĕллев кăларса тăратнă вăхăт тĕлне эпир хамăр патра, Чăваш Енре, указ тĕллевĕ пурнăçланнă тапхăртаччĕ ĕнтĕ, Чăваш Енри библиотекăсем В.В. Путин палăртнă çул-йĕрсене пурнăçлама хатĕрччĕ. Çийĕнчен Владимир Владимирович хăй те маларах Чăваш Енре, Шăмăршă ялĕнче, пулнă май çак ĕç çынсемшĕн питĕ усăллине курса ĕненнĕччĕ. Çак çулсенче библиотекарьсен çеç мар, чи малтанах ял çыннисен хăйсен культурине ӳстермелли çĕнĕ майсем туса панăшăн нумай тав сăмахĕ илтрĕм.

**– Çакă паллă пулчĕ: шăпах Президент тата Чăваш Енĕн библиотекарьсен корпоративлă пĕрлĕхĕ çине тăрса ĕçленипе республикăн Наци библиотекин Б.Н. Ельцин ячĕллĕ Президент библиотекин федерацин Атăлçи округĕнчи регион центрĕ пулса тăмалли шанчăк çуралчĕ. Çакă ялсенчи тĕслĕх библиотекăсен “пилочĕ” пулăшнипе пулчĕ-и?**

– Çапла, шăпах çавăнпа Раççей Президенчĕн округри полномочиллĕ представителĕ А.В. Коновалов пире суйласа илчĕ. Пĕтĕмпех логикăпа килĕшсе тăрать: пирĕн Наци библиотеки те, ялсенчи 500 тĕслĕх библиотека та паянах Президентăн электрон библиотекипе çыхăннă идейисене тăрăнрах та анлăрах пурнăçламалли никĕс пулса тăма пултараççĕ, Чăваш Енри библиотекăсен информатизацийĕ паянах 80 процентпа танлашать-çке, Раççейри вăтам кăтарту вара – 10 процент. Юлашки вăхăтра пухнă опыт Раççейĕн библиотекарьсен пĕрлĕхĕшĕн, чи малтанах пирĕн граждансемшĕн тĕлĕнмелле пысăк! Халĕ пирĕн ялсенчи библиотекăсене çӳрекенсен йышĕ унччĕнхинчен 1,5 хута яхăн ӳснĕ! Кунта Интернетпа усă куракан 15 пин çынна регистрациленĕ, электрон ресурсĕсем усă курса панă справкăсен шучĕ 2 хут пысăкланнă. Пĕр сете пĕтĕçтернĕ тĕслĕх библиотекăсене информатизацилени вĕсемпе усă куракансене Раççейĕн библиотека интернет-ресурсĕсем çине тухма май парать. Ку ял çыннисене тĕлĕнмелле пысăк майсем парать.

Çирĕплетсех калама пулать: федерацин Атăлçи округĕнче çеç мар, Раççейре те эпир библиотека ĕçĕнче тĕп саккун кăларакансем пулса тăратпăр, çав шутра – кĕнеке вулас мода ертӳçисем те. Çавăнпа пĕрлех Наци библиотекине анлăн реконструкцилетпĕр, çакă унăн лаптăкĕсене 2,5 хут пысăклатма, ăна çĕнĕ йышши оборудованипе тивĕçтерме май парать.

**– Библиотекăсене çĕнетес ĕçре муниципалитет бюджечĕн майĕсемпе мĕнле усă курнă?**

– Ку влаçăн икĕ сыпăкĕн пĕрлехи проекчĕ пулчĕ. Пирвайхи те, юлашки те мар, анчах çынсемшĕн питĕ пĕлтерĕшлĕскер. Вырăнсенчи бюджетсен укçипе библиотекăсене юсарăмăр, вĕсен интерьерне лайăхлатрăмăр, çĕнĕ сĕтел-пукан туянтăмăр. Проектпа пăхнă мĕн пур библиотекăна газ кĕртнĕ, кашни иккĕмĕшĕн лаптăкне анлăлатнă е лайăхрах çурта куçарнă. Вулакансене меллĕ пултăр тесе нумай библиотекăра ĕç режимне улăштарнă. Чăваш Енре пурте усă куракан библиотека ĕç-хĕлĕн тĕслĕх стандартне хатĕрлесе çирĕплетнĕ, халĕ унпа Раççей субъекчĕсенче çеç мар, культура министрĕ мана пĕлтернĕ тăрăх, НППП çĕршывĕсенче те интересленеççĕ.

**– Çĕнĕ указра Эсир унччĕнхи программăра татса панă евĕр тĕллевсем лартатăр-и?**

– Çапла, эпир хамăрăн граждансемшĕн тата тепĕр пулăшу ĕçне стандартизацилесшĕн, унăн пахалăхне çĕклесшĕн, çĕнĕ модель туса хурасшăн. Ял çыннисен социаллă пурнăçне палăрмаллах лайăхлатрăмăр. Ку проекта та унччĕнхи пекех пĕрле пурнăçа кĕртĕпĕр: ял-хула тăрăхĕсем пӳлĕмсене юсассине хăйсем çине илĕç, эпир вара паха çутă, сасă, музыка оборудованийĕпе тивĕçтерме пулăшăпăр. Çавăн пекех эпир мĕн пур тĕслĕх клуба компьютерсемпе тивĕçтерĕпĕр, çакă клуб ĕçченĕсен, унта çӳрекенсен коммуникаци майĕсене анлăлатма кирлĕ. Библиотекăсене çӳрекенсем, калăпăр, тахçанах Парижри Луврта “курса çӳреме” пултараççĕ, манăн вара ялти культура çуртне килнĕ ентешĕмĕрсене Милан оперинче виртуаллă концерт кăтартас килет. Килĕшетĕр пуль: çакă пысăк пĕлтерĕшлĕ! Çапла ĕçлени çеç информаци тан марлăхĕн чăрмавĕсене сирсе пăрахма май парать. Çапла çеç эпир инçетри ялсенче стенасăр тата чикĕсĕр культура учрежденийĕ туса хурăпăр. Аса илтерем: юлашки çулсенче Раççейĕн 29 субъектĕнче тата 6 çĕршывра пирĕн 76 организаци йĕркеленнĕ, вĕсем пурте Тăван çĕршывпа тачă çыхăну тытаççĕ, Интернетăн çĕнĕ майĕсем пирĕн диаспорăна, Чăваш Ен тулашĕнче йĕркеленнĕ культура коллективĕсене халăх юррисене те, культурăпа çыхăннă ытти йăлайĕркене те упраса хăварма пулăшĕç. Чăваш этносĕн представителĕсене çеç мар, республикăра пурăнакан мĕн пур халăха.

Указ клуб учрежденийĕн паянхи тĕнче йышăннă çĕнĕ моделĕсене туса хума май парĕ. Ял библиотеки Патшалăхăн пĕрлехи экзаменĕнче пысăк кăтартусемпе палăрнă тата чăваш ачисене тĕп хулари чи лайăх вузсене çăмăллăнах вĕренме кĕмешкĕн май панă шкулсене çĕнетмелли программăна пулăшрĕ пулсан, çĕнетнĕ клуб ялăн социаллă чĕрĕлĕвне вăй парĕ. Клубăн паян чуна, ăс-хакăла пысăк сиен кӳрекен япăх телекăларăмсене улăштармалла. Унсăр пуçне, эпĕ иккĕленместĕп: клуб учрежденийĕн граждансен ăс-хакăлне кăна ӳстермелле мар, çынсен хутшăнăвĕсене чунлăх кӳмелле. Асламăшĕсен хăйсен мăнукĕсене çакăнта алăран çавăтса килсе тăван юрă-кĕвĕсене вĕрентмелле. Çакна пĕтĕмпех çĕнĕ технологисемпе усă курса тума пулать.

**– Николай Васильевич, килĕшетĕр пуль, ăста та пултаруллă кадрсем пулмасан культура отрасльне çĕнетес енĕпе ăнăçу тума май çук.**

– Эпир çакна тахçанах ăнланнă! Ку енĕпе пире Чăваш Республикин культурăпа искусствăсен институтĕнчен вĕренсе тухакансем пулăшма тивĕç. Ку института уçни чăваш халăхĕн ĕмĕчĕ тӳрре тухниех пулчĕ. Хальлĕхе пирĕн библиотекăсемпе клуб учрежденийĕсенче пенси çулĕсенчи, пенсие çывхаракан çынсем питĕ йышлă. Çапах та эпĕ тĕслĕх библиотекăсем тата клубсем çĕнелни унта çамрăк специалистсене явăçтарма пулăшасса шанатăп.

**– Пысăк ялсенчи клубсене çĕнетме палăртнă. Çынсен йышĕ пĕчĕк тата инçетри ялсенче пурăнакансен мĕн кĕтмелле?**

– Паллах, пирĕн тухăçлă ĕçлекен клубсене пулăшасси пирки шутламалла, çапах пысăк мар ялсенче пурăнакансемшĕн те тăрăшмалла. Вĕрентĕве çĕнетнĕ май шкул автобусĕсемпе усă курни хăйне тӳрре кăларнине пурте ăнланчĕç ĕнтĕ. Пирĕн çĕнĕ йышши, хаклă мар автоклубсем туянас тĕллевсем те пур. Çакă инçетри ялсенче пурăнакансене концертсене, тĕрлĕ мероприятие илсе килме çеç мар, кирек хăш кун концерт бригадисене, клубсен пултарулăх ансамблĕсене уя, фермăсене, шкулсене, халăх йышлă пухăнакан уявсене, ытти çĕре илсе кайма та май парĕччĕ.

**– Сирĕн указра клуб учрежденийĕсене пулăшас енĕпе тата мĕнле мерăсем палăртнă?**

– Ялсен культурине тĕрев памалли пысăк пĕлтерĕшлĕ элементсенчен пĕри – унăн ĕçченĕсен шалăвне тивĕçлĕ шая çĕклесси. Патшалăхпа общество çак категорири ĕçченсен умĕнче пысăк парăмра-ха, эпир ĕç-пуçа çине тăрсах лайăхлатăпăр. Чăваш Енĕн малашлăхĕ мĕнле пуласси пирĕн клубсен ĕçĕнчен те килет-çке. Указа пурнăçласа вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем халăх пултарулăхĕн йăлисене упраса хăвармалли тата аталантармалли проектсене пурнăçлама пысăк грантсем уйăрĕç. Грантсем конкурентлăх йĕркелеме, вĕсене пултарулăх енĕпе аталанма, малашлăхлă проектсене пурнăçлама, сăмахран, чикĕлеш енне кайса килме, Европа çĕршывĕсен халăх канăвне йĕркелемелли опычĕпе паллашма пулăшасса шанатăп.

Ĕç укçине çине тăрсах ӳстернĕ май эпир вĕрентекенсемпе врачсем тĕлĕшпе уйрăмах тимлĕ пултăмăр. Обществăшăн тăрăшакан, халăх йăлисене упраса хăварас, çитес ăрусене парас енĕпе хăйсен миссине ăнăçлă пурнăçлакан клуб ĕçченĕсем шалăвне пысăклатмалли майсем пурришĕн чунран савăнатăп, пирĕн çак çынсене тивĕçлипех хакламалла.

## Астăвăм

# «Вăрçă хирĕнче иртрĕ çамрăклăх»

1945 çулхи январĕн 6-мĕшĕ. Эпĕ, чăваш каччи, 22 çула пусрăм ĕнтĕ. Манăн каçхи хăнасем пурте тенĕ пекех хăйсен мухмăр пуррине систерсе мана старшина патне хăвалама пикенчĕç. Старшина хуçалăхĕнче тăрăшсах çула тухма хатĕрленни сисĕнчĕ. Мĕн çăмăлпа пынине пĕлсен мĕн кирлине ĕнерех панине пĕлтерчĕ, кирлĕ пулсан хăвармалла пулнине астутарчĕ. Юрать-ха ку сăмахсене илтсен ездовой пулăшма килĕшрĕ, хăй пытарса хунине тупса пачĕ.

Çапла вара мухмăрне те чĕртрĕмĕр, çула тухма та хатĕрленме тытăнтăмăр. Каçхине çĕнĕ вырăна кайма çула тухрăмăр. Пурте шухăша путнă. Малта пире мĕн кĕтнине никам та пĕлмест. Пирĕнпе пĕрле тенĕ пекех штрафниксен роти те пырать. Кăнтăрла вăрман хӳтлĕхĕсенче канатпăр, çĕрлехи сивĕре – çул çинче.

Январĕн 10-мĕшĕнче çĕрле пĕр ял патне çитсе тухрăмăр, кунта оборона тытнă салтаксене улăштартăмăр. Умра çатма пек тӳрем вырăн. Вырăнти халăх уйра тырă вырса çĕмелсем туса лартнă пулнă, анчах пирĕн çарсем нимĕçсене хĕссе пынă май кунта пĕр çын та юлманччĕ, тарса пĕтнĕччĕ.

Январĕн 12-мĕшĕнче нимĕçсем çине атакăна çĕклентĕмĕр. Кун пирки тӳпене çĕкленнĕ симĕс ракета систерчĕ. Пирĕн штурмовой батальонпа пĕрлех штрафниксен батальонĕ те çапăçăва кĕчĕ. Çутăлса çитменччĕха. Нимĕçсем те çывăрса лармарĕç, тӳрех мар пулин те, автоматсемпе пулеметсенчен, сыхланса юлнă мĕн пур тупăсемпе минометсенчен пеме пуçларĕç. Эпир те маххă памарăмăр. Тăшман пĕрремĕш линие çăмăллăнах хăварчĕ пулин те, тул çутăлнă тĕле иккĕмĕш оборона линине илессишĕн самаях хĕрӳ çапăçма тиврĕ. Çухатусем пирĕн енчен те самаях пулчĕç, санитаркăсем валли тар кăлармалăх сусăрăннисем те пулмарĕç мар.

Кунти çапăçусем Белачув хулишĕн пулчĕç. 5 кун хушши нимĕçсем пирĕн çине атакăна çĕкленсе пăхрĕç. Ун хыççăн вара хапăлĕсем пĕтрĕç пулас, чакма пуçларĕç. Анчах манăн тупă расчетĕнчен пĕр салтака аманнă пирки госпитале ăсатма тиврĕ.

Çапăçура пĕр уйăх ĕнтĕ. Хĕлĕ çемçе пулин те, талăкĕпех усă пĕлĕт айĕнче. Ăшах мар. Апла пулин те никам та нăйкăшма шутламан. Нимĕçсем чакса пыни пире хĕрӳлĕх кӳнĕ.

Февралĕн çурринче Бобер текен юхан шыв хĕррине çитсе тăтăмăр. Шыв урлă каçмалли кĕпере нимĕçсем аркатнăччĕ. Çуркуннехи уяр кун ирхине çыран тепĕр енче пĕр хула курăнать. Çуртсен чӳречисем çинче шурă япаласем вĕлкĕшеççĕ. Тĕлĕнмелле мар-и вара çакă? Ку вăл Боберчберск хули пулчĕ. Халăх ыйтнипе-ши е хăйсен хулине ан аркатчăр тесе, нимĕçсем пĕр çапăçусăр хулана хăварчĕç. Хуларан инçех мар вара канал чавнă пулнă. Анчах та çар картти çинче вăл пулман терĕç. Ку вара пирĕншĕн чăнах та пысăк чăрмав пулса тăчĕ. Унăн тепĕр енче нимĕçсем пысăк вăйпа оборона йышăнма пултарнă.

Нимĕçсене унтан та тустарса кăларсан, Одер юхан шывĕ хĕррине çитиех хăваларăмăр. Çĕр çинче юр çук пулин те, шывра пăр татăкĕсем юхатчĕç. Нимĕçсене тепĕр енче çирĕпленсе ларма памалла мар тесе тăхтаса тăмасăр юхан шыв урлă каçма приказ пачĕç. Саперсем ишĕлчĕк кĕпер çумне канат та карма ĕлкĕрчĕç. Эпир те хамăр тупăна пантон çине вырнаçтартăмăр. Малтанлăха чиперех каçма пуçăннăччĕ. Шыв варрине çитеспе пирĕн çинелле минăсем вĕçме пуçларĕç. Çывăхах ӳкнĕ пĕр мина пирĕн пантона аркатрĕ те пурте çурхи шыва шăмпăлтатма тытăнтмăр. Юрать-ха лашасем пулчĕç. Вĕсенчен кăкарăнса çырана чиперех тухма пултартăмăр. Анчах пĕри вара шывра пулăсен çимĕçĕ пулса юлчĕ.

Пире тӳрех типĕ çи-пуç пачĕç, спиртпа сăтăрса ячĕç. Ăш-чике ăшăтма та самаях пачĕç хаяррине. Тупăна кăларса тасатнă хыççăн каç тĕттĕмĕпе эпир Одер тепĕр енче плацдарм йышăнтăмăр. Расчетри аманнă салтак вырăнне тепĕр çын тупса пачĕç. Халĕ ĕнтĕ тупă расчечĕ тулли штатпа.

Нимĕçсене кунта та нумаях тытăнса тăма памарĕç пирĕннисем. Йывăррăн пулин те, февралĕн 22-мĕшĕ тĕлне Нейся текен юхан шывĕ хĕррине çитме пултартăмăр. Ку юхан шыв Одер юхан шывĕн юппи пулса тăрать иккен. Вĕсем пĕрлешнĕ вырăнта шурлăхлăччĕ. Пирĕн кӳршĕсем – 1-мĕш Белоруссии фрончĕн салтакĕсем. Берлин хули те 90 çухрăмра кăначчĕ. Пур салтакăн ĕмĕчĕ те унта çитсе курассиччĕ.

Нимĕçсем чакнă чух кунти ялтан нимĕн те илсе кайма пултарайман. Питĕ васканă пулас. Картиш тулли сыснипе чăххи-чĕппи, хур-кăвакалĕ. Вырăнĕсем епле илемлĕ тата. Шыв хĕррипе лартнă хыр вăрманĕ курорта аса илтерет. Тепĕр кунне Хĕрлĕ Çар кунĕ пулнă май салют пама хатĕрлентĕмĕр. Малалла кайма май çукки пирки пĕлтерчĕç. Тыл тăсăлса кая юлнă тата çынсен йышĕ те самаях чакнăччĕ ĕнтĕ. Снарядсемпе патронсем те çитсе пымастчĕç. Çавăнпа кунта оборона йышăнма тиврĕ. Хамăра валли пеме меллĕ позици йышăнса блиндажсем туса хатĕрлерĕмĕр. Вырăнтан вырăна куçса кашни каç пирĕн тупă расчечĕн нимĕçсем çине 7-8 снаряд кăларса ямаллаччĕ. Тепĕр 10-15 минутран çав вырăна вара минометсемпе тупăсенчен пеме пуçăнатчĕç. Ку вăл тăшманăн çав пемелли вырăнĕсене палăртма кирлĕ терĕç.

Çав вăхăтрах эпир пĕчĕк хуçалăх та йĕркелеме пултартăмăр. 3 çĕр пӳртрех 2 ĕне тата 50-60 чăх усрарăмăр. Ĕнисене курăк татса парса тата ялтан тырă илсе килсе тăрантараттăмăр. Чăхсем кунне 30-40 çăмарта туса паратчĕç, сĕчĕ те çитсе пыратчĕ. Ку вăл, паллах, салтак апачĕ мар пулин те, выçăранах аптăрамарăмăр.

Кунта пире Висла юхан шывĕ хĕрринчи пек нумай тытăнса тăма памарĕç. Апрелĕн 15-мĕшĕнче каллех чикансем пек çĕрле тепĕр позицие куçма пуçларăмăр. Кунта Нейся юхан шывĕ хĕрринчи илемлĕ вăрман уçланкинче нумай салтака наградăсем пачĕç. Награда панисем хушшинче вилнисемпе аманнисем уйрăмах йышлăччĕ. Ман кăкăр çине вара «Хĕрлĕ çăлтăр» орден çакса ячĕç. Ку вăл Белачув хулишĕн çĕрне-кунне пĕлмесĕр çапăçнăшăн тесен чун савăнчĕ.

Нейся юхан шывĕ урлă хамăр оборона йышăннă вырăнта мар, урăх тĕлте каçарчĕç. Нимĕçсем вара урса кайнă пекех хирĕç тăчĕç. Апрелĕн 18-мĕшĕ тĕлне Шпрея юхан шывĕ патне çитрĕмĕр. Çапăçусемпех çыран тепĕр енне каçрăмăр. Малта вара нимĕçсен Котбус хули. Ку хулашăн та чылай çапăçма, çухатусем тӳсме тиврĕ. 3 кун хушши чăлкăм куç хупмарăмăр. Нимĕçсем чаксах пыраççĕ. Берлина çитесси те 50 çухрăм кăна юлнине пĕлтĕмĕр.

Апрелĕн 26-мĕшĕнче каçхине Берлин хулинчен 9 çухрăмра канас шутпа вăрманта чарăнтăмăр. Çур çĕр иртсен часовой вăратрĕ. Вăрманта йывăççем хушшинчеункăна лекнĕ нимĕç салтакĕсем Берлин патнелле талпăнаççĕ. Кунта вара тупăран усси сахал, уй варринче мар вĕт. Ытларах автоматпа пулемет тата граната çине шанма тивет. Тытăçу пуçланчĕ. Нимĕçсен 3-4 атакине сирсе яма пултартăмăр.

Пире пулăшма ир енне танксем килсен нимĕçсем парăнчĕç. Вĕсен пире хирĕç тăма патронĕсем те пĕтнĕччĕ ĕнтĕ. Тĕрĕссипе нимĕçсем кунта нумаях марччĕ. Ытларахăшĕ Власов çарне хăйсен ирĕкĕпе çырăннă тыткăна лекнĕ вырăс салтакĕсемччĕ.

Ку çапăçура каллех пирĕн тупă фаустпатронпа арканчĕ. 2 салтак аманчĕ, пĕри вилчĕ. Эпир, 4 салтак, каллех тупăсăр. Нимĕçсене парăнтарсан вĕсен туппипе Карпат сăрчĕ урлă каçса Чехословакин тĕп хулинче Прагăра та вĕсен туппипех çапăçăва кĕме тиврĕ. Майăн 8-мĕшĕнче çĕрле нимĕçсен çарĕ парăнса капитуляци туни çинчен пĕлтĕмĕр. Майăн 9-мĕшне Çĕнтерӳ кунĕ тесе палăртрĕç.

Вăрçă вĕçленнине ĕненес те килмест. Хула хĕррине тухса пĕр ялта вырнаçрăмăр. Кил хуçи питĕ кăмăллăскер пулчĕ. Уçăмлах калаçма пултараймасть пулин те, вырăс сăмахĕсемпе калаçма тăрăшатчĕ. Çапла вĕçленчĕ 1418 куна пынă Аслă Отечественнăй вăрçă.

Тепĕр уйăх ытларах иртсен пире тревогăпа тăратрĕç те Чехословакин Слани хулине кайма приказ пулчĕ. Унта пирĕн 58-мĕш дивизирен 15-мĕш гварди дивизийĕн 50-мĕш стрелковăй полкĕн 76 миллиметрлă батарейине туса хучĕç.

Пире урăх дивизие куçарнă вăхăтра çапăçусенче паттăрлăх кăтартнăшăн нумай-нумай салтака орденсемпе медальсем парса чысларĕç. Эпĕ те 3-мĕш сепень Мухтав орденне илме тивĕçрĕм. Ункăна лекнĕ нимĕç çарне тĕп тунă çĕре хутшăннăшăн вара мана «Паттăрлăхшăн» медальпе наградăларĕç.

Çапла вара эпир Чехословаки çĕрĕ çинче 1945 çулхи ноябрь уйăхĕччен пултăмăр. Унтан Австри çĕрĕ çинчи Дунай шывĕ хĕрринчи Урфор текен хулана вырнаçрăмăр. Юхан шывăн тепĕр енче Америка салтакĕсемччĕ. Вĕсем пирĕн енне каçатчĕç пулин те, пире вара Дунайăн тепĕр енне ямастчĕç.

Австри çĕрĕ çинче эпир 1946 çулччен службăра тăтăмăр. Июнь уйăхĕн варринче пуçтарăнса Украинăна Винница облаçĕнчи Жемеринна станцине илсе кайрĕç. Унта вара 1947 çулхи март уйăхĕччен Тăван çĕршывăн шанчăклă салтакĕ шутланса тăнă.

Мартăн 20-мĕшĕнче демобилизаци йĕркипе киле ячĕç. Тăван яла 1947 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнче çитрĕм. Епле ирĕклĕх. Мана никам та команда памасть. Апла пулин те вăрçă çулĕсенче çухатнă çамрăклăх вăхăтне тавăрма çукки шухăшлаттарать.

Яла таврăнсан мана вырăнти пуçламăш парти организацийĕн секретарьне суйларĕç. Тинех пуçланчĕ çапла вара мирлĕ пурнăç.

**И. ВАСЮХИН,**
**вăрçă тата ĕç ветеранĕ.**